25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
АВГУСТ
16
ВЫРСАРНИКУН
191 (6126) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Пионерсемпе шкул ачисем! Колхозниксен хирӗсенче ӳксе юлнӑ пучахсене пухӑр. Ҫапла тунипе эсир тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма хӑвӑрӑн аҫусемпе пиччӳсене пулӑшатӑр!

Оборудованисене хӗҫпӑшала упранӑ пек упрамалла

Тӑван ҫӗршывӑн воинӗсем хӑйсен хӗҫпӑшалӗсене мухтаҫҫӗ, юратаҫҫӗ. Тыл панӑ кашни хӗҫпӑшал пултаруллӑ боец аллинче тӑшмана вилӗм кӳрет, ҫӗнтерӳ кунне ҫывхартать. Ҫавӑнпа та хӗрлӗ воинсем хӑйсен хӗҫпӑшалӗсене лайӑх тытаҫҫӗ, ӑна вӗренсе ҫитме тӑрӑшаҫҫӗ.

Тылри боецсен те хӑйсен хӗҫпӑшалӗ —станоксем, машинӑсем, инструментсем пур. Рабочисен ӗмӗчӗ—ҫав оборудованисемпе туллин усӑ курасси, фронта ытларах винтовкӑсем, пулеметсем, тупӑсем, танксем, самолетсем туса парасси. Анчах техникӑран мӗн илме май пуррине пӗтӗмпех илес тесен, ӑна юратас пулать, лайӑх пӑхас пулать.

Пирӗн предприятисенчи оборудовани —рабочи класӑн, пӗтӗм халӑхӑн пурлӑхӗ. Вӗсене ӗҫҫыннисем Сталинла пилӗкҫуллӑхсенче тӑрӑшса тунӑ. Халӗ вӗсем нимӗҫ пусмӑрҫисене тӑван ҫӗршывран хӑваласа кӑларас тӗллевпе ӗҫлеҫҫӗ. Совет ҫыннисем хӑйсен станокӗсем умӗнче ҫитес ҫӗнтерӳ валли хӗҫпӑшал тупаҫҫӗ. Ҫав станоксене упрасси—фронт умӗнчи хисеплӗ тивӗҫ.

Ҫакна пирӗн чылай рабочисем лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Канашри вагонсем юсакан заводри малта пыракан рабочисен Кашицын, Калашев, Григорьев, Пименов, Минько, Лукин, Пиульский тата ытти юлташсен станокӗсем ҫинче пӗр сиен те, пӗр тасамарлӑх та курма ҫук. Темӗн пек хӗрӳ ӗҫ вӑхӑтӗнче те вӗсем хӑйсен станокӗсене типтерлӗ тытаҫҫӗ, ӗҫ пӗтнӗ хыҫҫӑн шӑлса тасатса ҫу сӗреҫҫӗ, тепӗр сменӑна ӗҫе юрӑхлӑ параҫҫӗ. Мӗн те пулин ҫӗмӗрӗлсен, вӗсем Лунин меслечӗсемпе усӑ курса, ҫав ҫӗмрӗксене ҫийӗнчех юсаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсен станокӗсем яланах юсавлӑ тата сехет механизмӗ пек тӗрӗс ӗҫлеҫҫӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те пысӑк.

Анчах пирӗн предприятисенче тепӗр тӗрлӗ рабочисене те курма пулать. Маларах асӑннӑ заводри Панкратьев, Конторский, Парамонов тата Красных рабочисем хӑйсен станокӗсене япӑх тытаҫҫӗ: вӑхӑтра тасатмаҫҫӗ, ҫу сӗрмеҫҫӗ, юсамаҫҫӗ. Вӗсен ӗҫ вырӑнӗ те ҫӳпҫапллӑ. Ҫавӑнпа вӗсен ӗҫре час-часах кӑлтӑксем пулаҫҫӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те пӗчӗккӗ.

Кун пек тӗслӗхсене татах та илсе кӑтартма пулать.

Производство командирӗсен задачи лайӑх рабочисене хавхалантарасси, тирпейсӗррисене питлесси пулать, пур рабочисене те халӑх пурлӑхне хаклама, ӗҫ хатӗрӗсене тирпейлӗ тата юсавлӑ тытма вӗрентесси пулать.

Уйрӑмах ҫамрӑк рабочисене тимлӗн вӗрентмелле, опытлӑ рабочи таран пӑхса ӳстермелле. Вӗсен, техникӑна ҫителӗксӗр пӗлекенскерсен, ӗҫ хатӗрӗсене ватнисем час-часах пулаҫҫӗ. Вӗсене ватӑ рабочисен опычӗсемпе паллаштармалла, хӑй ӗҫлекен станокшӑн, усӑ куракан инструментшӑн ответлӑ пулнине ӑнлантармалла.

Рабочие станок парса, ҫӗршыв ун ҫине пысӑк шанчӑк хурать: рабочин ҫав станокпа фронта кирлӗ продукци памалла. Халӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, оборудованисене нихӑҫанхинчен вӑйлӑнрах ӗҫлеттерме тивет. Фронт нумай хӗҫпӑшал ыйтать. Станоксене, машинӑсене, агрегатсене ытларах ӗҫлеттерессии, нумайрах продукци туса кӑларасси вӗсене мӗнле пӑхса усранинчен килет. Ҫавӑнпа та оборудованисене упраса усрассишӗн продукци ытларах туса кӑларассишӗн тӑрӑшнӑ пекех тӑрӑшмалла, кашни работникӑн хӑйне шанса панӑ оборудванишӗн государство умӗнче ответлӑ пулмалла.

Анчах ҫакна хӑшпӗр предприятисенче рабочисем кӑна мар, ертсе пыракан работниксем те манаҫҫӗ. Ҫӗмӗрлери «Труженник» заводра ҫункавсем тӑвакан 7 станок ҫуркуннерен варах усӑ вырӑнта, ҫӑмӑр айӗнче, лараҫҫӗ. Завод директорӗпе парторганизаци секретарӗ ҫав станоксем ҫывӑхӗнчен кашни кун иртсе ҫӳреҫҫӗ пулин те, вӗсене пуҫтарса лартма шутламаҫҫӗ. «Пирӗн унта юрӑхлисем иккӗ ҫеҫ», тет парторганизаци секретарӗ Герасимов юлташ.

ВКП(б) XVIII-мӗш конференцийӗ хӑйӗн решенийӗнче: «оборудованисем, чӗр таварсем, материалсем, инструментсем час-часах ӑҫта килнӗ унта йӑваланса выртса, пӑсӑлса, тутӑхса юрӑхсӑра тухнине халех пӗтерсе хумалла», тесе кӑтартса хӑварчӗ.

Предприятисенчи парторганизацисем ҫак решени пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине тӗрӗслесе тӑма тивӗҫлӗ.

Фабрика, завод руководителӗсем, парти, профсоюз работникӗсем хӑйсем оборудованисене упрасси ҫинчен манаҫҫӗ пулсан, рабочисем станоксене, машинӑсене, инструментсене тирпейлӗ тытасси пулма пултараймасть. Рабочисем оборудованисене мӗнле тыткаланине пуринчен ытла мастерсен пӑхса тӑмалла, парти, профсоюз активӗсем вӗсене пулӑшса пымалла.

Чугунҫул ҫинче лунинла ӗҫ меточӗ сарӑлса пырать. Стрелочниксем стрелка хуҫалӑхне, машинистсем хӑйсен паровозӗсене ҫийӗнчех тата государство укҫине тӑкакламасӑр юсаса тӑраҫҫӗ. Лунинла ӗҫ методне предприятисенче те сарас пулать. Станоксем ҫӗмӗрӗлсен, вӗсене вӑраха ямасӑр тата харпӑрхӑех юсама пӗлмелле. Оборудовани юсавсӑр пирки ӗҫ чарӑнса тӑни пулмалла мар. Ҫавӑнпа та рабочисене станоксемпе ӗҫлеме кӑна мар, вӗсене юсама та вӗрентмелле. Ку тӗлӗшпе мастерсемпе опытлӑ рабочисен ытларах ӗҫлемелле.

Юсав ӗҫне организацилесси—инженерла-техникла работниксен тивӗҫӗ. Оборудованисене чылай чух пӗтӗмпех мар, пӗр-пӗр пайне юсама тивет. Ҫапла кашни пӗчӗк ҫӗмрӗке ҫийӗнчех юсаса тӑни оборудовани вӑхӑтсӑр юрӑхсӑра тухассинчен хӑтарать.

Ҫӗршывра хӗрӳ ӑмӑрту пырать. Рабочисемпе работницӑсем ӑмӑртура ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫакна асра тытмалла: ӑмӑртури ҫитӗнӳ тӑрӑшса ӗҫленинчен ҫеҫ мар, ӗҫхатӗрӗсене типтерлӗ тытнинчен те килет, юсавлӑ станок продукцие ытларах тата лайӑхрах туса кӑларать.

Оборудованисене хӗрлӗ воинсем хӑйсен хӗҫпӑшалӗсене упранӑ пек упрамалла!—ҫакӑн пек Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту участникӗсен лозунгӗ.

Машинӑсемпе туллин усӑ курмалла

ВӐРМАР. Районри колхозсен уйхирӗсенче колхозниксем хӗрсех тырӑ выраҫҫӗ. Сендимиркинӑри «Гигант», Уравӑшри «1-ое Мая» тата Кольцовкӑри Сталин ячӗпе хисепленекен колхозсенче тырӑсене ӑнӑҫлӑн пухса кӗртессишӗн, ялхуҫалӑх продукчӗсене срокчен парса татассишӗн пӗтӗм вӑя мобилизациленӗ. Кунта машинӑсемпе тата кӗреплеллӗ ҫавасемпе туллин усӑ кураҫҫӗ.

Катӑшри Чкалов ячӗпе тӑракан колхозра ыраш вырма тухнӑ малтанхи кунтанпах виҫӗ жнейка ӗҫлет. Ҫавасемпе ҫуласси те ӑнӑҫлӑн пулса пырать.

Анчах пур ҫӗрте те ӗҫ ҫакӑн пек мар-ха. Кӗҫӗн Кипекри «Память Ленина», Ҫӗнӗ Алтӑшри «Волга», Кивяххакассинчи «Пионер» колхозсенче машинӑсемпе икӗ-виҫӗ кун иртсен тин ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Ҫапла пулин те, хӑшпӗр жнейкӑсем халӗ те ӗҫлемесӗр лараҫҫӗ. Ҫӗнӗ Алтӑшри «Волга» колхозӑн лобогрейки 4 кун хушшинче вырӑнтан та хускалман.

Асӑннӑ колхозсенче тырра ҫавасемпе ҫуласси те ҫителӗксӗр пулса пырать. Кӑмаш колхозӗн председателӗ Яковлев юлташ «ҫавасем тӑккалаҫҫӗ, эпир алӑпах ҫынсенчен малтан пӗтеретпӗр» тесе калаҫса ларать. Колхоз тырӑ вырма виҫӗ кун кая юлса тухнӑ.

Т. СЕЛЕЗНЕВА.

Кӗрхи тырӑсем 487 гектар акнӑ

КАЛИНИНО, августӑн 14-мӗш. (**Телефонпа**). Августӑн 13-мӗш тӗлне районри 58 колхозран 29-шӗ кӗрхи тырӑсем вырса пӗтерсе ҫурхи тырӑсене вырма пуҫларӗҫ. Паянхи куна пурӗ 7.819 гектар вырса пухнӑ.

Уборкӑри ӗҫсем чылай колхозсенче пысӑк ҫӗкленӳпе пулса пыраҫҫӗ. Киров ячӗпе тӑракан колхоз кӗлтесене уйран ҫийӗнчех итем ҫине кӗртме тӑрӑшать, паянхи куна вӗсем 90 гектар ҫинчи кӗлтене турттарса капана хывнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех колхоз кӗртыррисем акас ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа туса пырать. Икӗ кун хушшинче 29 гектар акнӑ.

Августӑн 13-мӗш тӗлне районӗпе кӗрхи тырӑсем пурӗ 487 гектар акнӑ. Вӗсене пурне те сеялкӑсемпе акнӑ.

Ф. РОМАНОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Ӗнесемпе кӗлте турттараҫҫӗ

ИЕПРЕҪ, августӑн 14-мӗш. (**Телефонпа**). Энтриял ялсоветӗнчи «Коммунар», «МОПР» колхозсем кӑҫал тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе иртнӗ ҫулхинчен нумай лайӑхрах туса пыраҫҫӗ. Ӗҫе пӗр-пӗринпе ӑмӑртса тӑваҫҫӗ. Ӑмӑртура «Коммунар» колхоз мала тухрӗ. Кӗрхи тырӑсене колхоз планпа пӑхнинчен икӗ кун маларах вырса пӗтерчӗ. Августӑн 14-мӗш тӗлне кӗрхи тырӑсен 60 процентне уйран турттарса, ҫапса пӗтернӗ. Тепӗр 3—4 кунран колхоз кӗрхи тырӑсене ҫапас ӗҫе пӗтӗмпех вӗҫлет. Государствӑна тырӑ парас плана 53 процент тултарнӑ.

Колхозра туртӑм вӑйӗ сахалтарах. Колхозниксем ку йывӑрлӑха та сирсе янӑ. Уборкӑри ӗҫсенче ӗҫ ... пултӑр тесе, колхозниксем ӗнесемпе, вӑкӑрсемпе ӗҫлеҫҫӗ. Икӗ ӗнепе кулленех кӗлте турттараҫҫӗ. Хуҫалӑхри вак ӗҫсенче ӗнесемпе ытларах усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ.

«МОПР» колхозра та тырпулсене хӑвӑрт пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса пырать. Колхоз кӗрхи тырӑсене 5 ӗҫ кунӗ хушшинче вырса пухрӗ. Бригадӑсем пӗр-пӗрне пулӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Тӗслӗхрен, пӗрремӗш бригада (бригадирӗ Петров) хӑйӗн участокӗнчи кӗрхи тырӑсене малтан вырса пӗтерчӗ.

Колхоз государствӑн хатӗрлев пунктӗсене тырӑ турттарма транспорт бригади организациленӗ. Бригада тырӑ турттарас ӗҫе пысӑк тимлӗхпе тума тытӑнчӗ. Т. Иванова, А. Кириллова колхозницӑсем Йӗпреҫри хатӗрлев пунктне талӑкра иккшер хут кайса килеҫҫӗ. Талӑкне 18 центнер тырӑ леҫмелле пулсан, вӗсем 24-шар центнер леҫеҫҫӗ.

Августӑн 12-мӗшӗнче колхоз ҫурхи тырӑсене вырма пуҫларӗ. Паянхи куна «МОПР» колхоз 6 гектар сӗлӗ, 15 гектар хура тул вырса пуҫтарнӑ. «Коммунар» колхоз та 6 гектар хура тул пуҫтарнӑ, паян ҫурхи тулла тата сӗлӗ вырма тухнӑ. Ҫурхи тырӑсене колхозниксем кӗреплеллӗ ҫавасемпе хӑвӑрт ҫулса пуҫтарса илеҫҫӗ. Ҫийӗнчех ҫӗмеллесе пыраҫҫӗ. Ефимова колхозница кӗреплеллӗ ҫавапа кунне 0,50—0,60 гектар тырӑ ҫулать. Ҫавӑн пекех ку колхозсенче жнейкӑсем те пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксем ҫурхи тырӑсене 8 ӗҫ кунӗ хушшинче пӗтӗмпех вырса пуҫтарассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Хӑйсен сӑмахне пурнӑҫлаҫҫӗ

ҪӖМӖРЛЕ. (**«Чӑваш Коммуни» корр.**). Мӑн Улхашри «Красноармеец» колхозра тырӑ вырма тухас умӗн колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ пулса иртнӗ. Унта ваттисем те, ҫамрӑккисем те чылай пухӑннӑ. Вӗсем ҫине пӑхсан, ку колхозра ӗҫ вӑйӗ ӗлӗкхинчен ним чухлӗ те чакман пек курӑнать.

— Пӑхӑр-ха, мӗн чухлӗ пирӗн йыш. Аҫтан-ха эпир аякран пулӑшу ыйтӑпӑр? Пирӗн колхозниксенчен пӗр пайӗ фронтра тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫать-ҫке. Ман шутпа пирӗн те вӗсенчен юлма юрамасть. Астӑватӑр пулӗ, эпир хамӑр юлташсене ӑсатса янӑ чух, кашниех икшер-виҫшер ҫыншӑн ӗҫлеме пултӑмӑр...

Колхоз председателӗ Столбов юлташ малалла конкретнӑй цифрӑсем ҫине куҫрӗ. Колхозӑн миҫе гектар кӗрхи тата ҫурхи тырпула пуҫтарса кӗртмелли ҫинчен, уборкӑра кирлӗ машинӑсемпе инвентарьсене юсаса ҫитерни ҫинчен тата ӗҫ вӑйӗ ҫинчен тӗплӗн чарӑнса тӑчӗ.—Чӑнах та ӗҫсем сахал мар, анчах вӗсене пирӗн кӗске вӑхӑт хушшинче тата пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫламалла,—терӗ юлашкинчен председатель.

* * *

Колхозра уборка ӗҫӗ июлӗн юлашки кунӗсенче пуҫланчӗ. Колхозниксем 3—4 кун хушши уйрӑм участоксем ҫинче суйласа ыраш вырчӗҫ. Хальхи вӑхӑтра колхоз уйхирӗнче хӗрӳллӗ ӗҫ пырать, куллен ӗҫе 400—450 ҫын хутшӑнать. Паллах, вӗсенчен чылайӗшӗсем ҫамрӑксемпе ваттисем. Анчах ӗҫре вӑл палӑрмасть. Кашни колхозникпе колхозница ӗҫ нормине ирттерсе тултарма тӑрӑшать; вӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ: куллен тимлӗн ӗҫлени тырпула хӑвӑрт, пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртме пулӑшать, урӑхла каласан, ҫакӑ вӑл фронта пулӑшни пулать.

Колхозница Татьяна Гулящева ӗҫре хӑйӗн хастарлӑхне кӑтартрӗ. Вӑл ҫурлапа вырса нормӑна 130 процент тултарса пырать. Унӑн ӗҫ пахалӑхӗ те лайӑх. Анна Аношина, Елизавета Гулящева, Кротикова, Кайкова тата чылай колхозниксем куллен нормӑсене 1,5 хут ӳстерсе тултараҫҫӗ. Григорий Халманов кӗреплеллӗ ҫавапа кашни кун 0,8—1 гектар ҫулчӗ, 4—5-шер ӗҫкунӗ туса пычӗ.

Вырнӑ тырра ҫыхнӑ ҫӗрте уйрӑмӑнах Анастасия Кротиковӑпа Наталия Кайкова пысӑк ҫӗнтерӳ турӗҫ. Вӗсем пӗр кун хушшинче 1 гектар ҫинчи тырра ҫыхса пыраҫҫӗ. Машиновед Василий Карагин жнейкӑпа куллен 3 гектар вырӑнне 5-шер гектар вырать.

Пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсем колхозра сахал мар. Чӑнах та, малтанхи вӑхӑтра уйрӑм колхозницӑсем сӳрӗккӗн ӗҫлени е ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхни пулнӑ. Ку та мар, хӑшпӗрисем ӗҫе тухмасӑр тӑнӑ. Правлени ун пеккисем пирки ҫийӗнчех мерӑсем йышӑнчӗ. Халӗ акӑ вӗсем хушшинче ӗҫре малта пыракансем те пур.

Бригадӑсемпе колхозниксем хушшинчи ӑмӑрту сарӑлсах пырать. Бригадӑсенче агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ. Ялти учительницӑсем Ф. Кузьмина, Зараева, Кулебакова юлташсем кашни кунах колхозниксем хушшинче тӗрлӗ темӑсем тӑрӑх калаҫусем ирттереҫҫӗ, хаҫатсем вуласа кӑтартаҫҫӗ, стена хаҫачӗсем кӑларма пулӑшаҫҫӗ.

«Красноармеец» колхоз районра чи пысӑкки шутланать. Колхоз кӗрхи тырӑсене вырса пӗтернӗ, халӗ ҫурхи тырӑсене вырма тата кӗракине тума тытӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах колхозниксен пӗр пайӗ авӑн ҫапма пуҫланӑ. Паянхи куна темиҫе вуншар гектар ҫинчи тырра ҫапнӑ та ӗнтӗ.

— Тӑван Хӗрлӗ Ҫара эпир ӑнса пулнӑ тырпула пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртнипе, ӑна ҫителӗклӗ таран ҫӑкӑр, аш-какай, сӗт-ҫу парса тӑнипе пулӑшатпӑр,—теҫҫӗ колхозниксем.

Ӑмӑрту вӑйӗ

Тырпулсене пухса кӗме тухас умӗн Чкаловски районри Молотов ячӗпе тӑракан колхозӑн Перасковья Богданова ертсе пыракан бригади кӗрхи тырӑсене 7 ӗҫкунӗ хушшинче, ҫурхи тырӑсене 6 ӗҫкунӗ хушшинче вырса пухма йышӑннӑ.

— Астӑвӑр, уборкӑра пирӗн кӑҫал Григорий Николаев ертсе пыракан бригадӑпа ӑмӑртса ӗҫлемелле. Хӑвӑрах пӗлетӗр, вӑл бригадӑра стахановла ӗҫлекен звеносем пур, вӗсем ҫураки вӑхӑтӗнче колхозра мала тухрӗҫ — асӑрхаттарнӑ бригадир колхозницӑсенс.

* * *

Ҫӳллӗ ыраша вырӑнӑн-вырӑнӑн суйласа вырма пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлекен бригадӑсем юнашар тӑчӗҫ, ӗҫе пӗр кун хирӗҫ тухса пуҫласа ячӗҫ. Григорий Николаевӑн бригадинчи Шакаева ертсе пыракан стахановла звено малтанхи кунсенчех пысӑк тухӑҫлӑх кӑтартса ӗҫлени курӑнчӗ. Звенора 8 колхозница. Малтанхи кун вӗсем кӑштӑрлӑ ... апатчен пӗр гектар тырра вырса тухрӗҫ. Ҫак хыпар часах Богданова юлташӑн бригадине ҫитрӗ. Лайӑх хыпар. Стахановла ӗҫ тӗслӗхӗ. Шакаева юлташӑн звенипе ӑмӑртӑва тухнӑ Настя Богданова звени ӗҫре чылаях кая юлнӑ. Звеновод Настя Богданова, апат ҫинӗ хыҫҫӑн, хӑйӗн звенинчи колхозницӑсемпе ҫакӑн пек калаҫу пуҫларӗ:

— Капла эпир малтанхи кунах вӗсенчен юлма пултаратпӑр. Мӗнле пулсан та ҫаҫхи кӳлӗмре пирӗн вӗсене хуса ҫитсе иртсе каймалла...

Каннӑ хыҫҫӑн чӑнах та Настя Богданова звени ӗҫе маларах тытӑнчӗ. Ҫакна Шакаева звенинчи колхозницӑсем кӗтсех тӑнӑ пулас. Звено пӗр харӑссӑн ӗҫе тӑчӗ. Хӑвӑрт касаҫҫӗ ҫурласем. Ӑмӑрту. Ӗҫ хӗрӳленсе пычӗ. Ӗҫрен тӗттӗм пулсан ҫеҫ уйӑрӑлчӗҫ. Малтанхи кун Шакаева звенинчи колхозницӑсем 0,18-шер гектар, Н. Богданова звенинчи колхозницӑсем 0,17-шер гектар тырӑ вырни курӑнчӗ. Анчах ытти кунсенче Н. Богданова юлташ ертсе пыракан 2-мӗш бригада уборкӑра малта пычӗ. Хӑйсемпе ӑмӑртакансене вӗсем хуса ҫитсе иртсе кайрӗҫ. 5 ӗҫкунӗ хушшинче 60 гектар ыраш вырса бригада хӑйӗн ӗҫ планне икӗ кун маларах пурнӑҫларӗ. Колхозӑн куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Пӗрремӗш бригадӑри Шакаева юлташӑн стахановла звени (звенора 8 колхозница) кулленех 2,20 гектар вырса пычӗ. А. Павлова, Е. Верёвкина колхозницӑсем кулленех 0,23-шер гектар вырса хӑйсем хыҫҫӑн ыттисене те ертсе пычӗҫ.

Тырӑсене пухса кӗрес ӗҫе колхоз организованно туса пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫе пысӑк ҫӗкленӳпе туса пыраҫҫӗ.

Тырӑсене пӗр пучах хӑвармасӑр пухса кӗртессишӗн, тӑван ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫара ытларах тырпул туса парассишӗн кунта хӗрӳллӗн ӗҫлеҫҫӗ, социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн вӑйӗпе пур ӗҫе те хӑвӑрт та пахан туса пыраҫҫӗ

П. НИКОЛАЕВ.

Тӑваткӑл метрта 30 пучах тӑккаланса юлать

ШАХАСАН. (**Хамӑр корр.**). Районри чылай колхозсем тырӑ вырнӑ вӑхӑтра тӑккаланчӑксене хирӗҫ тивӗҫлипе кӗрешмеҫҫӗ. Уйрӑм колхозсенче ӗҫӗн пахалӑхӗ ытла та япӑх. Тӗслӗхрен, «3-мӗш Интернационал» колхозра тырра питех те тӑккаласа выраҫҫӗ. Кунта кашни тӑваткӑл метртах 30-шар пучах выртса юлать. Ҫапла колхоз, вӑл тӑкканчӑка халех пуҫтарса илмесен, кашни гектар пуҫне 300 килограмм тырӑ ҫухатать. Колхоз руководителӗ тата бригадирсем ҫакӑн пек киревсӗр ӗҫе кураҫҫӗ, анчах нимӗнле мерӑ та йышӑнмаҫҫӗ.

С. ШАДИН.

Малта пыракансем

ҪӖМӖРЛЕ. (**Хамӑр корр.**). Хутарти Ленин ячӗпе тӑракан колхозра бригадӑпа бригада, колхозникпе колхозник хушшинчи социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлсах пырать. Кашниех вӗсем уйри тырпула пӗр тӑккаламасӑр тата кӗске срокра пуҫтарса кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Кӗрхи тырӑсене вырнӑ ҫӗрте уйрӑмӑнах 7-мӗш бригада (бригадирӗ Мурза юлташ) пример кӑтартрӗ. Вӑл кӗрхи тырӑсене 5 кун хушшинче вырса пӗтерчӗ. Бригадӑсем хушшинчи куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав ун аллинчех юлчӗ.

Улттӑмӗш бригада членӗсем те лайӑх результатсем кӑтартаҫҫӗ, вӗсем те тырра планпа палӑртнинчен малтан вырса пӗтерчӗҫ.

Уйрӑм колхозниксенчен Александра Мурза, Прасковья Васильева, Татьяна Баранова, Мария Фадеева, А. Шангеева юлташсене палӑртмалла. Вӗсем ҫурлапа тырӑ вырса куллен хӑйсен нормисене икӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. А. Мурзапа П. Васильева колхозницӑсем тырӑ вырма тухсанах куллен 600-шер кӗлте туса пычӗҫ.

Колхозра пур колхозниксем те ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Ҫавна пула пӗтӗм колхоз кӗрхи тырӑсене кӗске срокра вырса пӗтерчӗ, авӑн ҫапас, кӗлтесене капана хывас ӗҫе организованно тытӑнчӗ.

Х. ЛИСИН.

Кӗрхи тырра планран ирттерсе акса хӑварар

Серебрянные Пруды районӗнчи „Заря“ ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсем Серебрянные Пруды районӗнчи тата Тула облаҫӗнчи мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсем патне янӑ ҫыру

Хаклӑ юлташсем! Пирӗн тӑван ҫӗршыв хаяр кунсене пурӑнса ирттерет. Урса кайнӑ тӑшман пирӗн ҫӗршывӑн пуянлӑх центрӗсем патнелле талпӑнать, пирӗн уйхирсене таптать. Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем, хӑйсен юнне, хӑйсен пурнӑҫне хӗрхенмесӗр Совет ҫӗрӗн кашни пусӑмне геройла хӳтӗлеҫҫӗ, противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтерсе пыраҫҫӗ. Асла тӑван ҫӗршыва хӳтӗлеме Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле мӗнпур совет халӑхӗ ҫӗкленчӗ. Заводсемпе фабрикӑсенчи рабочисем, апата пӗлмесӗр, вӑхӑта шутласа тӑмасӑр ӗҫлесе, фронт валли хӗҫпӑшал туптаҫҫӗ. Колхоз хресченӗсем уйхирсенче хӑйсен вӑйӗсене хӗрхенмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Фронтпа ҫӗршыв валли ытларах та ытларах продовольстви, промышленность валли — чӗртавар параҫҫӗ. Анчах та эпир тунӑ ҫитӗнӳсемпе тӑнланса лараймастпӑр. Нимӗҫсен фашистла вӑрӑ-хурахӗсем пирӗн совет ҫӗрӗн пӗр пайне тытса илчӗҫ, нумай тырпулсене таптаса пӗтерчӗҫ. Тӑшман вӑйӗ ҫак сиене пирӗн хамӑрӑн хуҫалӑхсенче аякан ҫӗр лаптӑкне ӳстерниле, мӗнпур йышши тырпулсен тухӑҫлӑхне татах та ытларах ӳстерни витмелле.

Хамӑрӑн колхоз пухӑвне пухӑнса, эпир, Серебрянные Пруды районӗнчи «Заря» колхоз членӗсем, усӑ курман ҫӗрсене акса хӑварса тата ирхи ҫӗрулмипе (кок-сагыз айӗнчен тухакан ҫӗрсене акса хӑварса, кӗрхи тырӑсен лаптӑкне аслӑлатма шут тытрӑмӑр.

Кӑҫалхи ҫул кӗрхи тырӑсене планран ирттерсе 50 гектар акса хӑварма сӑмах паратпӑр. Планпа пӑхнӑ 150 гектар вырӑнне эпир 200 гектар акатпӑр. Ҫак ҫӗр лаптӑкне эпир акма хатӗрлесе тунӑ ӗнтӗ.

Серебрянные Пруды районӗнчи тата Тула облаҫӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем! Эпир сире пирӗнтен пример илме чӗнетпӗр. Кӗрхи тырӑ культурисен гектарӗсене планран ирттерсе акӑр. Хамӑрӑн ҫӗршывпа фронта 1943 ҫулта ҫӗнӗрен ҫӗршер тонна тырпул хушса парар! Кӑҫал кӗрхи тырӑсене оборона фончӗ валли планран ирттерсе акса, эпир хамӑр халӑхӑн пӗрлешӳллӗ ӗҫне ҫӗнӗ вӑй кӳретпӗр, тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшатпӑр!

Серебрянные Пруды районӗнчи «Заря» ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ хушнипе: **А. Ф. ПОНОМАРЕВ. А. Ф. СУРМИНА, Е. А. ПАРАНИНА, М. Ф. СКВОРЦОВА, В. А. КОСЯКИНА** тата ыттисем те.

СӖЛӖ ВЫРАҪҪӖ

ИШЛЕЙ. (**Телефонпа**). Алинори Папанин ячӗпе тӑракан колхоз ҫуртри вырма августӑн 13-мӗшӗнче тухнӑ. Кунта пӗтӗмпе 29 гектар сӗлӗ вырнӑ. Бригадӑсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. П. Иванов ертсе пыракан 3-мӗш бригада ӑмӑртура малта пырать. Бригадӑри Ф. Сучкова, А. Кузьмина, Пучкова колхозницӑсем кӗреплеллӗ ҫавасемпе 0,40-шер гектар ҫулаҫҫӗ. Ҫав бригадӑра кӗреплеллӗ ҫавасемпе пурӗ 30 ҫын ӗҫлет. Виҫҫӗмӗш бригадӑра сӗлле машинӑпа выраҫҫӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗ И. Тютин куллен 7-шер гектар вырать.

З. МИТРОФАНОВА.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту

Ӑмӑртура мала тухни татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарать

КАНАШ, августӑн 15-мӗш. (**Телефонпа**). Чугунҫул ҫинчи работниксен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвне хутшӑннӑранпа тата Улатӑрпа Шупашкар станцийӗсен коллективӗсене ӑмӑртӑва чӗннӗренпе Канаш вокзалӗ хӑйӗн ӗҫне палӑрмаллах лайӑхлатрӗ. Вокзал ҫуртӗнче кӑтартуллӑ тасалӑхпа йӗркелӗх кӳнӗ. Пассажирсен ыйтӑвӗсене лайӑх тивӗҫтереҫҫӗ, билетсене аладинла майсемпе — вагонсем ҫинчех сутаҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах старши кассир Гришенков лайӑх ӗҫлет. Ӑна ҫавӑншӑн укҫан премиленӗ тата хисеплӗ грамотӑпа парнеленӗ. Багажсен камерин кладовщикӗ Бурмистрова, весовщик Грачкова юлташсем багажсем пухӑнса выртассине пӗтерчӗҫ. Вӗсем те премии илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Пассажирсемпе боецсем хушшинчи культмассӑллӑ ӗҫе те вӑйлатрӑмӑр. Июль уйӑхӗнче, сӑмахран, вокзалри работниксем 53 лекци, темиҫешер калаҫу ирттернӗ, тӑтӑшах хаҫатсем вуласа панӑ, кино-картинӑсем кӑтартнӑ. Пассажирсенчен пӗр жалоба та ҫук, тав тунисем сахал мар.

Ҫак ӗҫсене кура пирӗн вокзал Хусан чугунҫулӗ ҫинче малти вырӑна тухрӗ, июль уйӑхӗнче чугунҫул Управленийӗпе Политотделӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Пысӑк хисепе тивӗҫлӗ пулни вокзал коллективне татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарать. Халӗ пирӗн работниксем вокзала илемлӗ кӑн-кӑшат кӗртсе ҫитерес тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ: вокзал ҫуртне юсаҫҫӗ, площадка ҫине шлак сараҫҫӗ т. ыт. те. Ку ӗҫре пире хулари комсомол организацийӗ пысӑк пулӑшу парать

И. ГАЛУШИН.
Станци начальникӗ.

Малти вырӑнтах юлассишӗн

Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илнӗ заводри Кинзбургский юлташӑн цехӗ иртнӗ уйӑхри ӑмӑртура мала тухрӗ, заводӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илчӗ. Цех уйӑхри плана 148 процент тултарчӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхне 150 процент таран ӳстерчӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳснӗ май, цехри стахановецсен хисепӗ 65 процента, ударниксен хисепӗ 28 процента ҫитрӗ, пурте нормӑна тултарса ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Уйрӑм стахановецсенчен сверловщица А. Заводовская юлташ 278 процент, З. Данилова юлташ 233 процент, нарезчица М. Бондарь юлташ 248 процент, слесарь А. Александрова юлташ 218 процент тултараҫҫӗ. Ҫак работницӑсем производствӑна отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче килнӗ. Фронта продукци ытларах парассишӗн ҫунса, ӗҫе хӑвӑрт вӗренсе ҫитрӗҫ.

Социализмлӑ ӑмӑрту уйӑхӗсенче цехри мастерсем производствӑна лайӑх организацилеснин примерне кӑтартаҫҫӗ. Детальсене хатӗрлекен участокри старши мастер Р. Коневский, пӗтӗҫтерекен участокри А. Малыхин юлташсем продукцие пӗр пек кӑларса тӑраҫҫӗ, вӗсем графика пӑсни пачах та пулмасть темелле.

Цех коллективӗ ку уйӑхра та тикӗс ӗҫлет. Декадӑри задание ӑнӑҫлӑн тултарчӗ. Хӗрлӗ ялавлӑ цехри рабочисем, служащисем тата инженерла-техникла работниксем августра та хисеплӗ вырӑнтах юлассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

А. БЛОШЕНКО.
Завком председателӗ.

Хӑвӑртлӑхсене ӳстеретпӗр

Шупашкарти чӑлха фабрики иртнӗ уйӑхра планпа пӑхнинчен сахалтарах ӗҫлерӗ. Фабрика коллективӗ ку уйӑхра ӗҫ хӑвӑртлӑхне ӳстерсе пырать. Ҫыхакан цех декадӑри задание ӑнӑҫлӑн тултарчӗ. Цех, тӗпрен илсен, графика пӑсмасӑр ӗҫлет. Мастерсем Грим тата Зербуловская юлташсем хӑйсен участокӗсенчи производствӑна пултаруллӑ ертсе пыраҫҫӗ. Зербуловская юлташ хӑй те ӗҫлет, нормӑна икӗ хут ирттерсе тултарать. Инструктор Лукьяненко юлташ, ҫамрӑк рабочисене юратса вӗрентнӗ вӑхӑтрах, нормӑна 160 процент тултарса ӗҫлет.

Ӑмӑрту кунӗсенче чылай работницӑсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерчӗҫ. Работница Дубровина юлташ двухсотницӑсен ретне тӑчӗ, Иоффепе Фадеева юлташсем задание 160-шар процент, Белая—130 процент тултараҫҫӗ.

Е. БОГУСЛАВСКАЯ.
Фабрика директорӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Клетская** районĕнче, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта, çавăн пекех тата **Минеральные Воды, Черкесск, Майкоп, Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 13-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 50 танкне, войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 260 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 50 лавне, горючи тултарнă 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 6 складне тата горючин пĕр складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, чугунçул составне çапса аркатнă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче Н-ски чаçăн участокĕнче противник танксемпе мотопехотăн чылай пысăк вăйĕсене атакăна кĕртсе янă. Артиллеристсемпе бронебойщиксем гитлеровецсен боевой йĕркисене аркатса янă та нимĕçсен 11 танкне пĕтерсе тăкнă. Унтан çапăçăва совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем кĕрсе кайнă. Нимĕçсен çав çапăçура 800 çын ытла вилсе пĕтнĕ те, вĕсем малтанхи рубежсем патнех каялла чакнă. Клетскаяран кăнтăрарахри вырăнта пирĕн чаçсем противникăн юханшыв патне шăтарса кĕнĕ группировкине хирĕç хаяррăн çапăçнă. Пĕр участокра 700 çити гитлеровеца çавăрса илсе вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн летчиксем тăшманăн икĕ аэродромĕ çине вĕççе пырса тапăннă. Пĕр аэродром çинче противникăн 40 çыти бомбардировщикĕсемпе истребителĕсене çапса аркатса çунтарса янă. Кунсăр пуçне сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра вăйлă çапăçусем пулса пынă. Пирĕн войскăсем чылай участоксенче оборонăна куçнă противника атакăланă. Пирĕн пĕр чаçри подразделенисем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 5 танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Кӳршĕри участокра, артиллерирен персе, противникăн танкĕсемпе мотопехотин ушкăнĕсене сапаласа янă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç оборонăллă хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра неприятелĕн танкĕсемпе мотопехоти, питĕ пысăк çухатусем тӳссе, пирĕн оборонăн ăшне шала шăтарса кĕме пултарнă. Пĕр кун хушшинчи хаяр çапăçусенче Н-ски стрелковăй часть нимĕç пехотин икĕ ротине, румынсен кавалерин эскадронне пĕтерсе тăкнă тата противникăн 9 танкĕпе 2 бронемашинине стройран кăларнă. Кунсăр пуçне, пирĕн артиллерирен персе нимĕçсен 3 танкне, 5 орудине, боеприпассем тиенĕ 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă.

Минеральные Воды районĕнче противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç йывăр çапăçусем пулса пынă. Н-ски соединени, нимĕçсен темиçе атакине сирсе пăрахса, 15 танк тата 700 çити гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче артиллерипе пăшалсенчен хире-хирĕç персе тăнă. Уйрăм подразделенисенчи снайперсемпе разведчиксем активлăн кĕрешнипе тăшманăн 400 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Черепанов юлташăн подразделенийĕнчи снайперсем кăна пĕр кун хушшинче 168 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Августăн 12-мĕшĕнче фронтăн участокĕсенчен пĕринче пирĕннипе тăшманăн оборона линийĕсем ху[шшин]чи вырăна нимĕçсен самолечĕ пĕрексĕрех анса ларнă. Çав самолета хамăрăн территори çинелле туртса килнĕ.

* * *

Партизансен Белорусси районĕсенчен пĕринче кĕрешекен отрячĕ, нимĕçсен пысăк гарнизонне хирĕç çапăçса, 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ юханшыв урлă выртакан чугунçул кĕперне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Руди çумĕнче вăл ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «...эпĕ питĕ тарăхатăп, хал пĕтĕмпех пĕтрĕ. Салтаксенчен пĕр пайĕ вăрçă телейлĕн пĕтессине ĕненме пăрахрĕ. Нумаях та пулмасть пирĕнтен чылайăшĕсем тăван çĕршыва, хăйсен тăванĕсене курма ĕмĕтленетчĕç, анчах вĕсен ĕмĕчĕсем çитеймерĕç. Паян вĕсем, пурте пăрахса хăварнăскерсем, пĕчченшерĕн вăрмансенче выртаççĕ. Çапла, нимĕç салтакĕн пурнăçĕ кунта çунакан çурта пек туйăнать, ăна кирек хăçан та сӳнтерме пултараççĕ».

* * *

Ленинград облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем çавтери тискер преступленисем тăваççĕ. Гдов районĕнче гитлеровецсем колхозниксенчен мĕнпур апатçимĕçе, выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке туртса илнĕ, вĕсене выçă вилме тăратса хăварнă. Дубок ялĕнче гитлерла мерзавецсем красноармеецăн арăмне Евстафьевăна, виçĕ пĕчĕк ачапа пĕрле, витене хупнă та вĕсене чĕрĕллех çунтарса янă. Залесье ялĕ патĕнче хирти çыхăнăвăн линийĕ пăсăлнă пулнă. Нимĕç палачĕсем ялти халăха хăвалаcа пухнă та мĕнпур çынсен куçĕ умĕнче 16 старикпе çамрăк ачана çакса вĕлернĕ.

Августăн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Августăн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская** районĕнче, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта, çавăн пекех тата **Минеральные Воды, Черкесск, Майкоп, Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем противникăн темиçе атакине сирсе пăрахнă. Н-ски часть оборонин малти хĕрри патĕнче нимĕçсен çĕмĕрĕлнĕ икĕ танкĕ, 200 вилли выртса юлнă.

Клетскаяран кăнтăрарахри вырăнта тăшманăн пирĕн оборонăна шала шăтарса кĕнĕ группировкине хирĕç хаяр çапăçусем пулса пынă. Çав çапăçусенче нимĕçсем пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра противник пĕр ялăн хĕрри патне шăтарса кĕме пултарнă. Пирĕн боецсем, хăюллăн хирĕç пырса çапса, гитлеровецсене сирсе ывăтнă. Çав кунах нимĕçсем, 15 танк пулăшса пынипе наступление пехотăна кĕртсе ярса, иккĕмĕш атака туса пăхнă. Н-ски чаçри артиллеристсем тăшмана уçă позицисенчен персе вĕтсе илнĕ, нимĕçсен 6 танкне çĕмĕрнĕ. Гитлеровецсем çухалса кайнипе уçă курса, пирĕн боецсем контратакăна кĕрсе кайнă та нимĕçсен батальонне çапса аркатнă. Котельниковăран кăнтăрарахри вырăнта пĕр участокра пирĕн чаçсем, противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе, кăштах каялла чакнă та лайăхрах позицисенче çирĕпленсе ларнă.

* * *

Краснодар районĕнче хаяр çапăçусем пулса пынă. Артиллерипе авиаци хӳтĕлесе тăнипе гитлеровецсем Кубань шывĕн кăнтăр çыранне танксемпе мотопехотăн пысăк группировкине каçарма хăтланнă. Пирĕн штурмовой тата истребительнăй авиаци нимĕçсем хывнă каçăсене çĕмĕрнĕ тата тăшманăн войскисем пухăнса тăнă вырăнсене пыра-пыра çапнă. Противникăнне 16 танк, 20 автомашина, 17 орудие пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пехотине 3 батальона çити тата кавалерин эскадронне сапаласа янă. Тепĕр участокра противникăн [авто]матчикĕсен пысăк мар ушкăнĕсемпе [юханшыв] урлă каçма пултарнă. [...] енчи çырана каçнă нимĕç автоматчикĕсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçусем пыраççĕ.

* * *

Брянск фронтĕнче пирĕн пĕр часть противника ăнăçлăн атакăланă та усăллă высотана йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем контратака тунă. Пирĕн боецсем политрук Купаев ертсе пынипе, противникăн вăйĕсем йышлăрах пулнă пулин те, гитлеровецсен атакине сирсе пăрахнă. 100 çити салтакĕ вилсе пĕтсен, нимĕçсем каялла чакнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Партизансен Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ, Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, темиçе уйăх хушшинче нимĕçсен 600 салтакне тата 62 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Совет патриочĕсем нимĕç чаçĕсен икĕ штабне çапса аркатнă, чугунçул çинчи 5 эшелона ӳпĕнтернĕ, 13 кĕпере сирпĕнтерсе янă, 17 автомашина пĕтерсе тăкнă тата противникăн самолетне çунтарса янă.

* * *

Калинин облаçĕнчи Ильинское ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тискер-кайăкла ĕçĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Нимĕç вăрă-хурахĕсем яла иртнĕ çулăн вĕçĕнче килсе кĕчĕç. Вĕсем халăха нимĕн юлмиччен çаратрĕç, мĕнпур апатçимĕçе туртса илчĕç, ял укăлчинчен тулалла тухма чарчĕç. Хресченсем выçăпа вилес шăпа умне тăрса юлчĕç. Нимĕçсем Ильинское ялĕнче çичĕ уйăх хуçаланчĕç. Çав вăхăт хушшинче 265 çын выçса вилчĕ. Нумай çынсене гитлерла мерзавецсем пере-пере пăрахрĕç. Персе пăрахнисемпе вилнисене фашистсем пытарма чаратчĕç, мĕнпур вилесене колхозăн силос шăтăкне пăрахатчĕç». Акт çине Ильинское ялĕнчи С. Г. Червяков, Е. Н. Сизикова, Н. В. Сизикова, М. И. Широкова тата ыттисем те алă пуснă.

* * *

Тыткăна лекнĕ француз çар çыннисене хупса усракан Штеттин çывăхĕнчи çар лагерĕнче (Германия) 600 çын ытла ĕçе тухма килĕшмен тата хăйсене тăван çĕршыва ăсатма ыйтнă. Эсэсовецсем лагере çĕмĕрсе кĕнĕ те çынсене вĕлерме тытăннă. Гитлерла палачсем автоматсемпе пулеметсенчен персе тыткăнри 96 çынна вĕлернĕ. 112 çын йывăррăн аманнă.

Çĕçенхирте „тупнă япала“

Н. ХУЛИ, августăн 14-мĕш. (ТАСС). Н-ски чугунçул чаçĕнчи боецсем ĕç хыççăн алатланма вырнаçса ларнă. Сĕтел хушшинче яланах красноармеец Борисенко ларакан вырăн кăна пушă пулнă.

Вăл ыттисенчен кая тăрса юлнă та çеçенхирпе пĕччене[х] пынă. Ăна çеçенхир талккишĕнчи шăплăх лăпканă. Йĕри-тавралăх çавтери тӳлек пулнă.

Курăк ăшĕнче шăрчăксем чĕрлатнă. Инçех те мар пĕчĕк йывăç тĕми курăнса кайнă. Ăна курсан, Борисенко: «çакăнта тăшман пулас пулсан, çеçенхирте çав йывăç тĕми ăна пытанмалли пĕртен-пĕр вырăн пулса тăрать», тесе шухăшласа илнĕ.

Çакăн пек шухăшлама, тĕрĕссипе, сăлтавĕ те пулман, мĕншĕн тесен фронт линийĕ кунтан аякра выртнă. Анчах совет воинĕ, ытлашши шухăшласа тăмасăр, хăйĕн çулне улăштарнă та çав йывăç тĕми патнелле уттарнă. Акă мĕн каласа панă вăл кайран старши политрука Таболеев юлташа:

— Йывăç тĕми патĕнче курăк нумай татса купаланине асăрхарăм эпĕ. Кам, мĕнле сăлтавпа татма пултарнă ăна? Эпĕ йывăç тураттисене сиркелесе пăхкаларăм. Чăн шалта, йывăç тымарĕсем патĕнче, нимĕç парашютне тупрăм. Ăна татнă курăкпа тĕплĕн витсе хунă пулнă.

Çав кунах çеçенхире разведка янă. Разведкăн донесенийĕнче çапла çырнă: «Пирĕн территори çине аннă парашютиста шыранă районра нимĕн те [туп]ма[н]ăмăр», тенĕ. Тепĕр кунне Борисенко, хăй юлташĕпе пĕрле ĕçе кайнă чухне, пĕр çынна тĕл пулнă. Вăл кăштах уксахлакаланă. Красноармеецсем пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ. Иккĕш те пĕр вăхăтрах вĕсем çав ĕнер тупнă япала çак уксахлакан çынпа çыхăнса тăрать пулĕ тесе шухăшланă: парашютист çĕр çине анса ларнă чухне хăйĕн урине амантма пултарнă.

Палламан çынпа вĕсем калаçма тытăннă. Хăй мĕншĕн уксахлани çинчен çын ĕненмелле ăнлантарса панă. Анчах красноармеецсем ăна çапах тытса чарнă та чаçăн комиссарĕ патне илсе пынă. Тытса чарнă çынна ухтарнă чухне ун çумĕнче виçĕ тĕрлĕ хушаматпа çырнă документсем, Хĕрлĕ Çар командирĕн формине, совет чаçĕсем вырнаçса тăнине кăтартакан карттăпа, пĕчĕк радиоприемник тупнă. Борисенкопа Дзотов красноармеецсем фашистсен разведкин пысăк агентне тытнă пулнă. Ăна тăшман самолечĕ çинчен совет тылĕнче диверсисемпе шпионла ĕçсем тума антарса хăварнă пулнă.

Студентсене—отечественнăй вăрçă инвалидĕсене паракан льготăсем

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ отечественнăй вăрçă инвалидĕсем валли, вĕсене аслă шкулсенче тата техникумсенче вĕреннĕ чухне пама, льготăсем тунă. ВУЗ-семпе техникумсенче вĕреннĕшĕн вĕсене укça тӳлеттермеççĕ. Кунсăр пуçне ВУЗ-семпе техникумсен директорĕсене инвалидсен вĕренӳри паллисем çине пăхмасăрах вĕсене стипенди пама ирĕк панă.

Çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕн ретне илнĕ рядовой тата кĕçĕн начальство составĕн ачисене те, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1941 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх государствăран пособи илекенскерсене, вĕреннĕшĕн укça тӳлеттермеççĕ. (ТАСС).

—o—

СУД

Колхоз тыррине вăрланăшăн

Калинински районри «Пĕрлешӳ» колхоз кĕлетсем çитмен пирки тырра çулсеренех колхозниксен амбарĕсене те хунă. Çапла, Иван Алексеев колхозникĕн амбарне иртнĕ çул 54 центнер та 52 килограмм тырă хунă. Унăн амбарне çавăн чухлĕ тырă хуни çинчен колхоз кладовщикĕ П. Николаев Иван Алексеевран расписка çырттарса илнĕ.

Вăхăт иртет. Колхозниксем Иван Алексеев колхознике колхоз председательне суйлаççĕ. Колхозăн кладовщикĕ П. Николаев та ĕçрен уйăрăлса Хĕрлĕ Çар ретне каять, ун вырăнне Н. Семенов колхозник ĕçлеме тăрать.

Колхозăн пурлăхĕ çине ăмсанса пăхакан çын, Иван Алексеев, часах киревсĕр ĕç тума тытăнать. Председателĕн хисеплĕ ячĕпе усă курса, вăл хăйĕн амбарĕнче выртакан колхоз тыррине вăрлама пуçлать. Çĕнĕ кладовщикран распискăна илет те, ăна хăйне кирлĕ пек, 54 центнер та 52 килограмм вырăнне 45 центнер та 36 килограмм туса çырса хурать. Ытти тыррине михĕсем çине тултарса пасара кайса сутать, çитнуç илет т. ыт. те.

Çапла майпа И. Алексеев 8 центнер та 65 килограмм тырă сутнă. Председателĕн тӳрĕ мар ĕçне колхозниксем часах сисеççĕ. Ĕçе суд аллине параççĕ. Калинински районри халăх сучĕ çак ĕçе июлĕн 27-мĕшĕнче пăхса тухрĕ. Ултавлă майпа колхозăн пурлăхне çаратнăшăн Уголовнăй кодексăн 162«д» статьи тăрăх халăх сучĕ Иван Алексеева 5 çул хушши тĕрмене хупса усрамалла приговор йышăнчĕ.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Ют çĕршывсенче

Иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçассишĕн Англире пыракан движени

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Глазго хулинче массăллă митинг пулса иртнĕ. Унта иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма ыйтса резолюци йышăннă. Митингра 20 пин çын ытла пулнă. Митингра йышăннă резолюцире çапла каланă: митингра пулнисем пурте хăйсене правительство аллинче тесе шутлаççĕ тата иккĕмĕш фронт ыйтма пултаракан кирек мĕнле жертвăсене те тӳссе ирттерме хатĕр тăраççĕ, тенĕ.

Кăнтăр Уэльсран юлашки икĕ эрне хушшинче Черчилль патне 280 телеграмма пынă. Çав телеграммăсенче обществăн тĕрлĕ ушкăнĕсем халех иккĕмĕш фронт уçма ыйтаççĕ.

Кăнтăр Уэльсри уйрăм çынсемпе организацисем Черчилль патне, унран иккĕмĕш фронт уçма ыйтса, 10 пин открыткăран кая мар янă.

Америка бомбардировщикĕсем Наварин çине вĕççе пырса тапăнни

НЬЮ-ЙОРК, августăн 14-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Каиртан çапла пĕлтерет: Америкăн бомбардировщикĕсем Наварин çине (Грецин хĕвеланăç çыранĕнчи портĕ) вĕççе пырса тапăннă. Неприятелĕн портра тăнă крейсерĕсенчен пĕрин çине икĕ бомба тĕл лекнине палăртнă. Тепĕр крейсер çинче пушар тухнă. Виççĕмĕш крейсерăн порчĕ çинче взрыв пулнă.

Рузвельт Америка халăхне чĕнсе калани

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Çар материалĕсем туса кăларас тĕлĕшпе питех те палăракан çитĕнӳсем тунăшăн промышленность предприятийĕсемпе рабочисене наградăлама США правительстви ятарласа орден тунă. Çав майпа США президенчĕ Рузвельт Америка халăхне радио тăрăх чĕнсе каланă. Рузвельт сăмахне США-ри мĕнпур радиостанцисем трансляциленĕ.

«Пирĕн тăшмансене çĕнтерес тесен мĕн тума кирлине илсе пăхсан,—тенĕ Рузвельт,—эпир халĕ малтанхи утăмсем кăна тунă-ха». Рузвельт çакна кăтартса панă: çар материалĕсем туса кăларас тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем чылай çитĕнӳсем тунă ĕнтĕ, анчах та тĕнĕл держависене пĕтĕмĕшпех çĕнтерес тесен, çар материалĕсем туса кăларассине татах та ытларах ӳстермелле. Рузвельт пĕрлешнĕ çĕршывсем çĕнтерессине шанса тăни çинчен каланă.

Çар материалĕсем туса кăларассине татах та ытларах ӳстерме чĕнсе, çав кунах Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен политикăллă тата обществăллă паллă деятелĕсем радио тăрăх тухса каланă.

Германире экономикăллă йывăрлăхсем ӳсни

ЖЕНЕВА, августăн 14-мĕш. (ТАСС). Швейцарин «Нейс цюрхер цейтунг» хаçатĕнче Германире экономикăллă йывăрлăхсем ӳссе пынине кăтартакан статья пичетлесе кăларнă. Статьяра çакна палăртнă: 1941 çулăн иккĕмĕш çуррийĕнчен тытăнса, чĕртавар ресурсĕсем куллен сахалланса пынине пула, вăрçă производствипе çыхăнман промышленноçăн отраслĕсем чарăнса ларма пуçланă. Иртнĕ çулăн вĕçĕнче чĕртавар запасĕсем пĕтсе пынипе пĕрлех, нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче çавтери пысăк çухатусем тӳсни те Германи промышленноçĕнчи лару-тăрăва сивĕчлетсе янă. Хĕçпăшал туса кăларас ĕçри чи пысăк йывăрлăхсенчен ĕç вăйĕ çитменни уйрăмах палăрса тăрать.

Хаçат малалла çакна палăртать: ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисене ĕçе йышлăн явăçтарнă пулин те, предприятисен ĕçĕ халь ĕнтĕ татах та ытларах чакса пыма пултарать. Мĕншĕн тесен, çара тата çыннисĕр мобилизацилени[не] пула, çар промышленноçĕнчен те рабочисене нумай илсе каяççĕ. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси Германире малашне те хăвăрттăн чакса пырĕ. «Çакăнтан ниепле те пăрăнса кайма çук, — тесе çырать хаçат, — мĕншĕн тесен, „официальнăй йĕркепе йышăннă тăрăх та, вăрçăн малтанхи икĕ çулĕнче вакă суту-илӳри таварçаврăнăшне тытса пыма май панă таварсен запасĕ вĕçне çитсе пырать“».

Лавалĕн еврейсене хирĕçле мероприятийĕсем

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Кĕрешекен Францин çыннисем Лондонра илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсем оккупацилемен зонăран Европăн хĕвелтухăçне еврейсене 10 пин çынна яма хушнипе Лаваль килĕшнĕ. Июлĕн 30-мĕшĕнче каçхине Францин чылай хулисенче çынсене арестлесси пуçланнă. Июлĕн 31-мĕшпе августăн 1-мĕшĕнче Марсельпе Лион хулисенче еврейсене ухтарса тытма пуçланă.

Лавалĕн еврейсене хирĕçле çак решенийĕ, Виши правительстви халăхран пытарса хăварма хăтланнăскер, Франци халăхĕн чи анлă сийĕсене çавтери тарăхтарса янă.

Оккупациленĕ совет хулисем çинче тĕттĕм каç тăрать

СТОКГОЛЬМ, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Оккупациленĕ совет хулисенчи халăххăн, фашистла бандитсем çаратса пĕтернĕскерĕн, пурнăçĕ калама çук начаррине гитлерла хаçатсем пĕр вăтанса тăмасăр çырса пĕлтереççĕ.

«Дейче альгемейне цейтунг» хаçатăн военнăй корреспонденчĕ çапла çырать: «Полтава урамĕсем тăрăх çынсем сĕтĕрĕнсе çӳреççĕ, вĕсем мĕнле асапланса ывăнса çитнине каласа пама та йывăр. Хулари магазинсем хупă».

«Одессăри çуртсен ванчăкĕсем çумĕпе, —тесе çырать «Остдейчер Боебахтер» хаçат, — асап курса пĕтнĕ çынсем хуллен те хуйхăллăн утса иртеççĕ, вĕсем çине пăхсан, вĕсем хĕнхур курнине туятăн. Вĕсен куçĕсем вĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр хăрани, яланах нуша курни çинчен каласа параççĕ».

Германи самолечĕсем Швеци чиккисене халĕ те пăсаççĕ

Германи самолечĕсем Швеци çинче каллех вĕççе çӳреççĕ. Швецин кăнтăр пайĕнче çавăн пек вĕçевсем тăтăшах пулса иртеççĕ. Августăн 3-мĕшпе 4-мĕшĕнче Германи самолечĕ тата Германин вĕçекен лодки Скона çыранĕ çывăхĕнче Швеци территориллĕ шывĕсем тĕлĕнче вĕççе çӳренĕ. (ТАСС).

Индири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Бомбейри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, августăн 12-мĕшĕнче Дели, Лакнау, Пуна, Варда, Мадур, Мурадабад тата Карачи хулисенче демонстрацисем пулса иртнĕ. Калькутта хулинче джут фабрикисенчи 6 пин рабочи забастовка пуçласа янă. Çав фабрикăсем Ганди—Бирла майлă тăракан çынсен фабрикисем пулса тăраççĕ. Нагпур хулинче демонстрантсем полицин виçĕ участокне тата почта çуртне çунтарса янă, электростанципе банк çурчĕсене вут тĕртме хăтланнă. Полици халăх ушкăнĕсем çине пăшалсенчен пенĕ, жертвăсем пур. Халăх [ушкăн]сем персе 19 полицейскине амантнă. Юлашки тăватă кун хушшинче пе[р]тĕмпе 70 çынна вĕлернĕ (вĕсенчен [..] çын Бомбейра вĕлернисем), 300 çынна амантнă. Çав вăхăт хушшинчех полици 400 çынна арестленĕ.

ВАШИНГТОН, августăн 14-мĕш. (ТАСС). Государственнăй департамент çапла пĕлтернĕ: Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсене приказ панă, çав приказра Америка войскисем Индире тăнин пĕртен-пĕр тĕллевĕ—тĕнĕл держависене хирĕç вăрçасси пулса тăрать тесе кăтартса панă. Вĕсен пĕрремĕш задачи Китая пулăшасси, çавăн пекех тата Инди çине тĕнĕл держависем пырса тапăнсан, ăна хӳтĕленĕ çĕре хутшăнасси пулса тăрать. «Америкăн Индире тăракан войскисен Индин шалти политикăллă ĕçĕсене хутшăнассинчен е хутшăннă пек тăвассинчен пур майсемпе те пăрăнмалла», — тенĕ приказра.

ГЕНЕРАЛ ДЕ ГОЛЛЬ КАИРА ПЫРСА ÇИТНИ

Рейтер агентстви хыпар панă тăрăх, Лондонра официальнăй йĕркепе çакăн çинчен пĕлтернĕ: Каира пырса çитнĕ генерал де Голль ирĕклĕ Францин Африкăри тата Сирири войскисене пăхса çӳрет. Вăл французсен Египетри войскисем патĕнче, Бир-Хакейма хӳтĕлекенскерсем патĕнче, пулать. (ТАСС).

—o—

Турци послĕ г. Джеват Ачикалын ССР Союзне килсе çитнĕ

Кăçалхи августăн 14-мĕшĕнче Куйбышев хулине Турци республикин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй послĕ г. Джеват Ачикалын килсе çитнĕ. Джеват Ачикалына Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн вăтаçĕр-хĕвелтухăçĕнчи отделĕн заведующийĕ С. И. Кавтарадзе юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн протокольнăй отдел заведующийĕн заместителĕ Г. И. Фомин юлташ, Иран ĕçĕсен повереннăйĕ г. А. Этесами, çавăн пекех тата Турци ĕçĕсен повереннăйĕ г. Ф. Зорлу пуçпулса тăракан Турци посольствин составĕ кĕтсе илнĕ.

—o—

КĔСКЕН

● Виши правительстви закон кăларнă. Çав закон тăрăх Францин мĕнпур промышленноçĕ тенĕ пекех ĕçлеме чарăнать. Хальхи вăхăтран пуçласа металлран кăна мар, йывăçран та нумай япаласемпе хатĕрсем туса кăларма чарнă.

● Бильбао влаçĕсем (Испания) 388 хресчене вĕсем хăйсен продовольстви запасĕсем çинчен пĕлтерме килĕшменшĕн штрафланă.

● Познань хулинче икĕ рабочине, вĕсем тыткăна лекнĕ вырăс çыннисене тарма пулăшнăшăн, вĕлермелле приговор йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Наркомпрос Чувашской АССР об'являет прием учащихся в Чуварлейскую школу слепых детей, Алатырского района и в Чешламинскую школу глухонемых детей Козловского района.

В выше указанные школы принимаются глухонемые и слепые дети от 8-ми до 10-ти лет.

Лица, желающие устроить своих детей в указанных школах должны подать заявление на имя директора школы с приложением к нему свидетельства о рождении, справки о состоянии здоровья.

Дети, зачисленные в число учащихся, будут обеспечены общежитием и питанием.

Наркомпрос Чувашской АССР.

Требуются: бухгалтер, секретарь-машинистка и сторож для работы в г. Чебоксарах.

Обращаться по адресу: ул. Карла Маркса, д. № 7.

Чувашсельэлектро.

Утерянный угловой штамп Центрального Совета Осоавиахима Чувашской АССР считать недействительным.

Центральный Совет.

Последние дни пребывания ГОСЗВЕРИНЦА

Открыт с 9 ч. утра до 9 ч. вечера. Демонстрируются обезьяны, ягуар, барс, разные медведи и страусы, говорящие попугаи, кенгуру и др.

МОСКОВСКИЙ ХИМИКО-ТЕХНОЛОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ МЯСНОЙ ПРОМЫШЛЕННОСТИ

об'являет прием студентов на I курс института на факультеты:

ТЕХНОЛОГИЧЕСКИЙ

Готовит инженеров-технологов мясной промышленности.

ИНЖЕНЕРНО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ

Готовит инженеров экономистов для мясомолочной промышленности

ВЕТЕРИНАРНЫЙ

Готовит ветеринарных врачей для мясной и молочной промышленности.

Срок обучения на технологическом факультете — 3 г. 4 мес., на инженерно-экономическом факультете — 3 года и на ветеринарном — 3 г. 5 мес.

Прием в институт производится согласно общим правилам приема для ВУЗ'ов.

Лица, возвратившиеся из Красной Армии и Воен. Мор. Флота освобождаются от платы за обучение и могут быть зачислены на госстипендию.

Прием заявлений до 1 сентября

Институт предоставляет общежитие для иногородних студентов и обеспечивает стипендией на общих основаниях.

Приемные испытания с 20 августа.

Окончившие полную среднюю школу в 1941 и 1942 годах с отметками «отлично» и «хорошо» принимаются без испытаний.

Лица, сдавшие экзамены в средних школах в 1941 и 1942 г. г. не на «отлично» и «хорошо», могут быть приняты в ВУЗ без экзамена при наличии свободных мест.

Заявления направлять по адресу: п/о Сурское, Куйбышевской области, Филиал Московского Химико-Технологического Института Мясной Промышленности; ехать до ж. д. ст. Алатырь, Ленинской жел. дороги, а затем пароходом до Сурского.

К заявлению должны быть приложены: подробная автобиография, аттестат об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике); паспорт (пред'является лично); три фотокарточки (снимки без головных уборов, размер 3 х 4 см) с собственноручной подписью поступающего на каждой из них, заверенной госучреждением; справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных).

ДИРЕКЦИЯ ИНСТИТУТА.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 265 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.